25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 18 КĔÇНЕРНИКУН 140(6075) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

График вăл—фронт приказĕ

Предприяти график тăрăх ĕçлесси—социализмлă производствăн законĕ. График вăл предприятисен пысăк организацилĕхне, вĕсем çирĕп йĕрке тăрăх пĕр тикĕс ĕçленине пĕлтерет. Ĕç вăйне, вăхăта тата материалсене шута илсе тунă график предприятисен ĕçĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ партин XVIII конференцийĕ малтанах хатĕрленĕ график тăрăх ĕçлеме, производство программине кашни фабрика, завод, шахта, цех тăрăх тултарма хушса хăварчĕ.

Çулталăка яхăн пыракан вăрçă пирĕн предприятисен производство программине урăхлатрĕ. Чылай фабрикăсемпе заводсен, артельсемпе мастерскойсен фронтăн васкавлă заказĕсене илме тиврĕ. Çав заказсене пурнăçласси кашни предприяти коллективĕн хисеплĕ ĕçĕ, унăн тăван çĕршыв умĕнчи таса тивĕçĕ пулса тăрать.

Фронт хăйне кирлĕ продукцие çителĕксĕр е начар туса кăларнине, кая хăварса çитерсе панине тÿсме пултараймасть. Халĕ, рабочисемпе работницăсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçленĕ чух, производствăна пĕр тикĕс организацилени, материалсемпе чĕртаварсене вăхăтра тата çителĕклĕ парса тăни кирлĕ. Çаксене пурне те график тăрăх ĕçлесен çеç тивĕçлипе пурнăçлама пулать. Çавăнпа та хальхи вăхăтра график—производствăн иксĕлми законĕ пулса тăрать.

Республикăри малта пыракан предприятисем вăрçă условийĕсенче те тикĕс ĕçлеççĕ, кирек мĕнле участокри ĕçсене те пысăк хăвăртлăхпа тăваççĕ. Вĕсен пĕр участокри ĕç тепĕр участокри ĕçрен юлса, предприятин пĕтĕм производствине чăрмав кÿмест. Бенский юлташ ертсе пыракан завод çĕршыва кирлĕ продукцисене те, çавăн пекех фронта кирлĕ заказсене те ăнăçлăн туса кăларать. Завод коллективĕ, графиксене тăтăшах пурнăçласа пырса, хăйĕн ĕçне уйăхран уйăха лайăхлатать.

Çĕмĕрлери тата Куславккари комбинатсенче те график—производствăн законĕ пулса тăнă тесе калама пулать. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн ку предприятисем чылай тикĕсрех ĕçлекен пулчĕç, продукци памалли плана кунсерен тултарма пуçларĕç. Вăрмарти спорт инвентарĕсем тăвакан фабрика коллективĕ те юлашки вăхăтра кулленхи графика лайăх пурнăçласа пырать.

График тăрăх ĕçлесси вăл, партин XVIII-мĕш конференцийĕ кăтартнă пек, плана предприяти тăрăх вăтамран илсе çеç мар, ăна кашни кун, кашни цехра, кашни бригадăра, кашни станок çинче, кашни сменăра тултарса пымаллине пĕлтерет.

Анчах çапла тунине республикăри пур предприятисенче те курма çук-ха. Сăмахран, Канашри вагонсем юсакан заводри чылай цехсенче график уйрăм станок, бригада тата смена тăрăх мар, пĕтĕмĕшпе те пурнăçа кĕмест. График уйрăмах кунти тимĕрçĕ, ремонтно-механически цехсенче тăтăшах пăсăлать. Вĕсен руководителĕсем графика тивĕçлипе хаклама вĕренсе çитмен-ха. Апатçимĕç Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем тĕлĕшпе те çавнах калама тивет. Вĕсем оборудованисемпе те кирлĕ пек усă курмаççĕ.

График уйрăмах чугунçул çинче çирĕп закон пулса тăрать. Железнодорожниксен ăна пĕр кăлтăксăр пурнăçласа пымалла. Апла пулин те Канаш узелĕнчи работниксем поездсене çÿретмелли графика пăскалаççĕ. Станци начальникĕ Галушин, унăн заместителĕ Семишкур юлташсем ĕçе тĕрĕс те тикĕс организацилессишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ поездсене вăхăтра йышăнса, вăхăтра ăсатни çук. Транзитнăй вагонсем пушă тăни, вырăнти вагонсем пушă тăни, поездсене семафор умĕнче тытса тăни те пулкалать.

Графика ăнăçлăн пурнăçласа пырас тесен, фабрикăпа завод, станципе вокзал руководителĕсен ĕçре пултаруллă та çаврăнăçуллă пулмалла, пур участокри ĕçсене те пĕртан ертсе пымалла. Çав вăхăтрах графика пурнăçлама мĕнле çитменлĕхсем чăрмантарнине, вĕсене мĕнле пĕтермеллине курса тăрас пулать.

Çак тĕлĕшпе илсен, уйрăмах диспетчерăн пуçаруллă тата тавçăруллă пулмалла. Унăн график мĕнле пурнăçа кĕнине пăхса лармалла çеç мар, производствăн кашни звенине оперативно ертсе пыма предприяти директорне пулăшса тăмалла. Диспетчер производство процесне пур участоксенче те кирлĕ хăвăртлăхпа илсе пымалла тăвассишĕн кĕрешме тивĕçлĕ.

Производствăна график тăрăх организацилени тата ăна çирĕппĕн пурнăçласа пыни оборудованисемпе, материалсемпе, инструментсемпе тата ĕç вăйĕпе туллин усă курма май парать. Графикпа ĕçлени плана кашни смена, бригада тата станок тăрăх пурнăçлама, çĕршывпа фронта ытларах продукци пама пулăшать. Çавăнпа та график тăрăх тикĕс, пĕр кăлтăксăр ĕçлесси—кашни предприятин кулленхи законĕ пулса тăмалла.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии" звенине тума

ЕЛЧĔК. Июнĕн 15-мĕш тĕлне самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума районĕпе 15.000 тенкĕ пухăннă. Вăл шутран Патрикел ялсоветĕнчи ĕçсыннисем — 1.400 т. панă, Хирейпес ялсоветĕнче 1.100 т., Тăрăмра — 1.200 т., Таяпа Энтриелĕнче — 1.070 тенкĕ пухнă.

Анчах çак ĕç çителĕклĕ пулса пырать теме çук-ха. Самолетсен звенине валли укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе партин тата комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем чылайĕшĕ ĕçсыннисем хушшинче сахал ĕçлеççĕ, уйрăм ялсенче паянхи кунччен те ку ыйтупа колхозниксене ăнлантарса паман. Самолетсен звенине тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатас пула-

Ф. ПОЗДНЯКОВ.

ИШЛЕЙ. Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума июнĕн 10-мĕш тĕлне 1.200 тенкĕ укçа пухса панă.

И. САМАРИН.

* * *

СĔНТĔР. Всевобучăн Мăн Сĕнтĕрти вĕренÿ пунктĕнчи боецсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем пурĕ 800 тенкĕ укçа пухса панă. Укçа пухас ĕç халĕ те пырать.

Ф. ЯНДУШКИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 16-мĕшĕнче **Харьков** енче пирĕн войскăсем противникăн темиçе атакине сирсе янă.

Фронтăн **Севастополь** участокĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсен пур атакисене те сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем тÿстернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ тата разведчиксем шыраса çÿренĕ.

* * *

Июнĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 12 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине, 10 зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен склачĕпе горючи складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи состава çĕмĕрнĕ, противникăн 3.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне тата 2 мотоботне путарнă, 4 транспортне тата хуралта çÿрекен 2 карапне сиенленĕ, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче пирĕн часть пĕр ялта вырнаçса тăнă противника сасартăк атакăланă. Нимĕçсем капла пуласси не кĕтмен. Кĕске, анчах та хаяр çапăçура нимĕçсен 30 машинăран тăракан автоколоннине, 12 орудине тата 4 танкне пĕтерсе тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлернĕ. Тăшмана хирĕç пирĕн танкистсем ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Старши лейтенантăн Антоновăн танк экипажĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен 3 туппине пĕтерсе тăкнă, 2 танкне çĕмĕрнĕ тата 50 нимĕçе вĕлернĕ. Старши лейтенантăн Харенăн танк экипажĕ 6 миномет, 4 пулемет, 2 мотоцикл тата 50 гитлеровеца яхăн пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенантăн Козаковăн танк экипажĕ противникăн танка хирĕç пемелли орудине пусарса лартнă. Хăюллă танкистсем пулеметсенчен персе гитлеровецсен отрядне çĕр çумне лапчăтса хунă та тыткăна парăнма хушнă. Нимĕçсен 46 салтакĕ хăйсен офицерĕсемпе пĕрле парăннă. Танкистсем вĕсене штаба илсе пырса панă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем противника вăйлă çирĕплетнĕ вырăнтан хĕссе кăларнă. Çав çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çынна çити пĕтнĕ. Пирĕн боецсем темиçе оруди, 9 миномет, 19 пулемет, танксене хирĕç пемелли 6 пăшал, винтовкăсем, патронсем тата минăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Гитлеровецсем, резервсем илсе пырса, хăйсен çухатнă позицийĕсене тавăрма 3 хутчен хăтланса пăхнă, анчах вĕсене виççĕшĕнче те каялла сирсе янă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн артиллерисем нимĕçсен 3 блиндажне çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, темиçе станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем 200 салтакпа офицертан кая мар çухатнă.

* * *

10 гитлеровец çыхăну взвочĕн командирĕ Бысенко юлташ тăнă блиндажа çавăрса илнĕ те ăна тыткăна илме хăтланнă. Паттăр командир, хăй аманнине пăхмасăр, нимĕçсен 9 салтакне тата тепĕр офицерне вĕлернĕ. Пулăшма васкаса çитнĕ боецсем хăйсен командирне çăлса хăварнă.

* * *

Украинăн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчен пĕринче партизансен Б. юлташ ертсе пыракан отрячĕ активлăн кĕрешет. Оккупантсене хирĕç кĕрешнĕ 10 уйăх хушшинче партизансем 1.200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем нимĕçсен 2 штабне аркатса тăкнă, чугунçулпа пыракан войскăсен 4 эшелонне ÿпĕнтерсе янă, чугунçул çинчипе шоссе çинчи 13 кĕпере, продовольствин 2 складне пĕтерсе тăкнă тата аэродром çинче нимĕçсен пĕр самолетне çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем, темĕн чухлĕ вăй хурса, Сталино хулинчи (Донбасс) электростанцин пĕр пайне тÿрлетсе çитернĕ пулнă. Анчах та нимĕçсем станцие хута яма ĕлкĕреймен, ăна сирпĕнтерсе янă. Заводăн тÿрлетнĕ уйрăм цехĕсенче оккупантсем танксемпе автомашинăсем юсама хатĕрленнĕ, анчах та вăл цехсене те хура шăпа пырса тивнĕ. Çĕрле совет патриочĕсем вăл цехсене пурне те сирпĕнтерсе янă, завод кантурне çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 698-мĕш пехотнăй полкĕнчен тыткăна парăннă салтак Иозеф Н. çапла каласа панă: «Пирĕн полк Хĕвелтухăç фронтне март уйăхĕн варринче çитрĕ. Вăл çапăçусенче пулманпа пĕрех. Анчах апла пулин те, салтаксен шухăш-кăмăлĕсем питех те пусăрăнчăк. Эпир чăтма çук йывăр ĕçпе тата тĕрлĕрен нарядсемпе ывăнса çитрĕмĕр. Ирхи шуçăм çуттипех ĕçе тухса сĕм тĕттĕм пулса çитиччченех укрепленисем тунă. Çывăрма вăхăт питех те сахал юлса пынă. Çитменнине тата эпир час-часах выçă ларнă. Салтаксен тумтирĕсем çĕтĕлсе пĕтнĕ, хăйсем пыйтланса кайнă. Вĕсен нумайĕшĕн çие тăхăнма кĕпе-йĕм те çук.

Пирĕн ротăри салтаксем чылайĕшĕ хăйсен ирĕкĕпе тыткăна парăнасшăн. Эпĕ вунă хушаматран та ытларах калама пултаратăп, анчах та эсир вĕсем çинчен пичетре ан пĕлтерĕр, мĕншĕн тесен пичетре пĕлтерни вĕсене сиен тума пултарать. Вĕсем вырăссем енне каçма майлă вăхăт килсе тухасса кăна кĕтеççĕ».

* * *

Магдебург çывăхĕнчи (Германия) Çар завочĕсенчен пĕринче ĕç укçинчен ирĕксĕрлесех тем валли те укçа катса юлнине хирĕç протестлесе рабочисем забастовка пуçласа янă. Фашистсен «ĕç фрончĕн» чиновникĕсем рабочисене забастовкăна пĕтерме ÿкĕтлесе пăхнă, анчах та вĕсене хĕнесе тăкнă. Вара вырăнти влаçсем столовăйсемпе магазинсене хупса лартнă. Халăха çапла пĕлтернĕ: рабочисем ĕçе тухса забастовка организаторĕсене влаçсем аллине париччен продуктсем пама пăрахатпăр, тенĕ. Пухăннă халăх магазинсене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Тепĕр кунне завода эсэсовецсен батальонĕ çитнĕ. Тем чухлĕ çынна арестленĕ.

* * *

Югослави партизанĕсем нимĕçсемпе итальянец оккупанчĕсене хирĕç геройла кĕрешеççĕ. Халĕ партизансен выступленийĕсем анлăрах та анлăрах пулса пыраççĕ. Нумаях пулмасть, Словенире итальянецсен партизанĕсене хирĕç çапăçма пехота чаçĕсене кăна мар, артиллерипе авиаци чаçĕсене те ямалла пулнă. Виçĕ эрне хушши пынă çапăçусенче партизансем оккупантсене çĕмĕрсе тăкнă. Итальянецсен даннăйĕсем тăрăх, Итали салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна вĕлернĕ, чăннипе илсен, итальянецсене унтан нумай ытла пĕтернĕ. Партизансем грузовой автомашинăсене нумай пĕтернĕ тата чугунçул çинчи темиçе эшелона пĕтерсе тăкнă, противникран пысăк трофейăсем тытса илнĕ.

Июнĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче нимĕçсен пехотин пысăк отрячĕ психикăлла атака тунă. Гитлеровецсем пĕтĕм ÿт-пĕвĕсемпе тăрса, автоматсенчен тĕлли-паллисĕр персе, тискеррĕн кăшкăрса пынă. Ханин лейтенантăн артиллеристсем, харăссăн тата тĕл персе, нимĕçсене сапаласа янă. Çапăçу хирĕнче противникăн вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем нумай выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн часть противник танкĕсен тата пехотин темиçе атакине сирсе пăрахнă, 20 танка пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Лобзев—политрук, Орловский — механик-водитель, Николаев — оруди командирĕ, Медведев—лейтенант пулса тăракан танк экипажĕ ăнăçлăн кĕрешнĕ. Хастарлă танкистсем нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити тата 11 оруди пĕтерсе тăкнă, автомашинăсен колоннине аркатса тăкнă.

* * *

Брянск фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть противникăн пĕр оборонăллă пунктне йышăнса илнĕ тата нимĕçсен çĕрле чавса лартнă 2 танкне тытса илнĕ. Гитлеровецсен хăйсем çухатнă позицийĕсене каялла тавăрас шутпа тунă темиçе атаки ăнăçман. Çав çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын ытла вилнĕ.

* * *

Пирĕн боецсен ушкăнĕ çине (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) противник пехотин пĕр роти тапăннă. Красноармеецсем тăшмана çывăха янă та пăшалсемпе пулеметсенчен персе, гитлеровецсене çĕр çумне лапчăтса хунă. Нимĕçсем 5 хутчен атакăна кайнă, анчах кашни хутĕнчех, пирĕннисем хăйсене вăйлăн хÿтĕленине пула, çаврăна-çаврăна кайнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çынна çити вилсе выртсан, вăл каялла чакнă.

Морозов юлташ командир пулса тăракан чаçри артиллеристсем нимĕçсен 3 танкне тата минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă, 8 дзота çĕмĕрнĕ, артиллерин икĕ батарейин тата темиçе огневой точкăн вутне пусарса лартнă.

* * *

Старши лейтенант Калегаев юлташ ертсе пыракан разведчиксен группи противникăн тылне кĕрсе кайса, 12 салтакпа пĕр офицера пĕтерсе тăкнă. Разведчиксем нимĕçсенчен пĕр станковăй пулемет тытса илсе хăйсен чаçне ăнăçлăнах тавăрăннă. Хăйсемпе пĕрле пĕр салтака, тыткăна лексе кайнăскере, илсе пырса панă.

* * *

Снайпер Фрундин юлташ пилĕк уйăх хушшинче 150 гитлеровеца вĕлернĕ. Çав вăхăт хушшинчех вăл 45 красноармееца снайпер пулма вĕрентсе çитернĕ.

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Совет Союзĕ Великобританипе Договор тата США-па Килĕшÿ туни çине Чăваш республикинчи ĕççыннисем ĕçри пысăк çитĕнÿсемпе ответлеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, июнĕн 17-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Совет Союзĕ Великобританипе тата США-па килĕшÿ туни çинчен пĕлтерни районри ĕççыннисене питех те хаваслантарчĕ. Предприятисемпе колхозсенче производствăллă çĕнĕ çĕклену вăйланса пырать.

Июнĕн 15—16-мĕшсенче судоверьфри бригадăсем ĕç нормисене ирттерсе тултарчĕç. Маклашкин бригади заданисене 185 процент, Шипунов бригади — 130 процент, Селиверстов бригади — 124 процент, Сивов бригади — 122 процент таран пурнăçа кĕртнĕ. 15 çулхи рабочи Юрий Шевнин ĕç нормине 16[illegible] процент тултарнă.

Çак çĕнĕ хыпара итлеме пухăннă пу[illegible] хура «Социализм» промысла артелĕн членĕсем ĕç нормисене 110—150 процент тултарса пыма, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пама пулчĕç. Июнĕн 16-мĕшĕнче рабочисем Семенов — пĕр простынь тата пĕр мăшăр ăшă носки, Рачкова — фуфайка, Косолапов — фуфайка, Орлов — ăшă шалавар, пĕр мăшăр çăматă панă. Артелĕн ытти членĕсем те ăшă япаласем парас ĕçе хутшăнчĕç.

«Красноармеец» колхозăн членĕсем хăйсен пухăвĕнче çакăн пек обязательствăсем илнĕ: тырпул тата çĕрулми тухăçлăхне планпа пăхнинчен 10 процент ытларах ÿстерме, ялхуçалăх продукчĕсем тăратмалли обязательствăсене пăлăртнă срокчен 10 кун маларах тултарма, фермăсенче выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатма, вĕсенче çĕнĕрен 40 сурăх, 15 сысна пăхса ÿстерме, çамрăк выльăхсене пурне те пăхса ÿстерме пулнă.

«Правда» колхозри митингра бригадир Терентьева: виçĕ аслă держава килĕшÿ туни тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма май парать, тесе каланă. Унăн бригади тĕштырă пуссисенчи çумсене пуринчен малтан çумласа пĕтернĕ. Колхоз тырпул тухăçне ÿстерессишĕн кашни ĕнерен çулталăкне вăтам шутпа 1.500—1.800 литр сĕт суса илессишĕн тăрăшса ĕçлеме пулнă.

Л. ВИГДОРЧИК.

* * *

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн студенчĕсемпе преподавателĕсем ССР Союзĕ Великобританипе договор тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе килĕшÿ тунипе хавасланаççĕ.

Июнĕн 15-мĕшĕнче пулнă митингра партбюро секретарĕ Андреев юлташ çапла каларĕ:

— Çак договорпа килĕшÿ вăрçăра нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме тата ытларах шанчăк параççĕ. Гитлер çарне тĕп туса хума фронтпа тыл валли ытларах продукци туса кăлармалла, фронта пулăшса тăрассине вăйлатас пулать.

— Эпир институтра вĕреннĕ хыççăн июлĕн 20-мĕшĕнче практикăна каятпăр, пирĕн унта нихăçанхинчен лайăхрах ĕçлемелле, ытти рабочисемпе колхозниксене пример кăтартса пымалла. Сталин юлташăн майăн пĕррем[illegible]шĕнчи приказне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлес пулать, — терĕ студентка-отличница Корнилова юлташ.

М. СМЕТАНИН.

ССР Союзĕпе Великобритани хушшинчи Союзлă Договора алă пуснă май. Укерчĕк çинче: ларaççĕ (сулахаяллa)—Великобританин Премьер-Министрĕ **У. Черчилль**, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ **А. Иден**, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов**, ССР Союзĕн Великобританири Посолĕ **И. М. Майский**.

В. М. Молотов юлташ Вашингтонра пулнă май. Укерчĕк çинче: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ **Франклин Д. Рузвельт** тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов.**

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

Украинăри партизансен Я. юлташ ертсе пыракан ушкăнĕ 12 пульмановски вагонран, противникăн йышлă çарсене турттара пыракансенчен, тата боеприпассем тиенĕ 10 платформăран тăракан поезда йăтăнтарса янă. Взрывсем темиçе сехет хушши илтĕнсе тăнă. Вагонсемпе платформăсем пурте çунса кайнă.

Нимĕçсен 198-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 308-мĕш полкăн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Фюрст Гётфрид çапла каласа панă: «Вăрçăн 11 уйăхĕ хушшинче пирĕн дивизи калама çук пысăк çухатусем тӳснĕ. Пĕлтĕрхи кĕркунне 326-мĕш полка аркатса тăкнă. Ана уя тунă вырăн юлашкисене 305-мĕш полксем çумне хутăнтарнăччĕ. 308-мĕш полкăн йышĕ пĕтĕмпе тенĕ пекех çĕнелнĕ. Совет Союзĕпе вăрçă пуçланă салтаксенчен темиçе çын çеç тăрса юлнă. Салтаксем тарăхаççĕ, анчах тарăхнине ытлах палăртмаççĕ-ха. Германирен хăрушă çырусем килеççĕ. Тăвансемпе пĕлĕшсем хăйсен вырăнĕ пирĕн çинчен хăйсем пурне те пăлантарса систерни çинчен çыраççĕ. Çав çырусем салтаксен шухăш-кăмăлĕсене пусараççĕ». Юлашкинчен тыткăнри салтак çапла каланă: «Украинăн оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсен çар влаçĕсем мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантараççĕ. Кировоградра пĕр украинеца çакса вĕлернине эпĕ хам куртăм, унăн кăкри çине «Вырăссене кăмăлланăшăн», тесе çырса çакнăччĕ».

Ленинград облаçĕнчи Ламовы Горки ялĕнче гитлеровецсем мирлĕ пурăнакан халăха тискеррĕн асаплантарнă. Фашистла ирсĕрсем çав ялти 23 çынна персе е асаплантарса вĕлернĕ. Асаплантарса вĕлернисен хушшинче çаксем пур: 90 султи Анна Рожкова, Теплякова Екатерина тата унăн ывăлĕ 3 уйăхри хĕрĕ, 11 султи Семен Михайлов, 13 султи Ваня Иванов, 15 султи Вася Рыхлов тата ыттисем те. Гитлеровецсем 67 кил çуртне çунтарса янă тата колхозниксенчен продовольстви, тумтире, ată-пушмаксене çаратса илнĕ.

СССР, Великобритани тата США пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленине ирĕклĕхе юратакан халăхсем гитлерла тиранине çĕнтермелли май вырăнне хурса шутлаççĕ

В. М. Молотов юлташ Лондона тата Вашингтона кайса килнин итогĕсем çинчен пĕтĕм тĕнчере халĕ те çыраççĕ

АНГЛИЯ

Вăйлă тата вăраха пыракан союз

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕш. (ТАСС). «Санди экспресс» хаçат çапла çырать: «Икĕ вăйлă пысăк держава йышăнса тăракан пур çĕрти туссемпе тăшмансем те йышăнаççĕ. Чи малтанах, договор 20 çуллăха пырать. Çакă вăл—вăрăм срокăн статьи, Кĕске срокăн обязательстви унтан кая мар. Вăл хăçалан çул Европăра иккĕмĕш фронт уçассине палăртса хурать. Ăна пурне çак пăхсан, Англия хăйĕн ĕçĕпе кăна обязательство пурать. Чаннипе илсен, Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕçпăшалланса йĕркелесе пĕтерме пĕрле килĕштерсе ĕçлеççĕ».

КАНАДА

Берлиншăн калама çук кичемлĕ ĕç

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 15-мĕш. (ТАСС). Каладăри Торонто хулинче тухса тăракан «Стар» хаçат çапла çырать: «Англипе Совет Союзĕ хушшинче договор туни Берлиншăн калама çук кичемлĕ ĕç пулса тăни пирки нимĕнле иккĕлентĕр те пулма пултараймасть, мĕнпе тесен гитлеровецсем чеен пропаганда туса Англие Россиăран уйăрма май килĕ тесе мĕн юлашки вăхăтченех шанса тăнă».

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМ

Виçĕ аслă державăн тĕллевĕсен тата ĕçĕсен пĕрлĕхĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 15-мĕш. (ТАСС). Люисвильре (Кентукки штатĕнче) тухса тăракан «Курьер джорнэл» хаçат çапла çырать: хальхи конфликта сирсе ярас тесе Совет Союзĕ тăрăшнă чухлĕ урăх нимĕнле государство та тăрăшман; Совет Союзĕ пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен калакан пакт йышăнма чĕнсе тăчĕ тата çакăн пек доктрина кăларса кăтартрĕ: тĕнчене пайлама çук, кирек хăш районра сиксе тухакан вăрçă та мĕнпур çĕршывсене хăратать. Халĕ, Молотов килсе кайнине пула, малашнехи пурнăç нумай савăнăçлăрах курăнакан пулса тăчĕ. Гитлера хирĕç кĕрешекен виçĕ аслă державăн тĕллевĕсен тата ĕçĕсен пĕрлĕхне туса хунă.

КИТАЙ

Агрессие хирĕçле пĕтĕм фронтшăн савăнăçлă ĕç

ЧУНЦИН, июнĕн 15-мĕш. (ТАСС). «Саотанбао» хаçат çакна кăтартса парать: Молотов Англие тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене кайса килни агрессие хирĕçле пĕтĕм фронтшăн савăнăçлă ĕç пулса тăчĕ. «Эпир çакна палăртма кирлĕ тесе шутлатпăр,—тет хаçат:—çĕнĕ договора ăна Сталинпа Черчилль питĕ аслă пулнине пула та Молотовпа Иден малашнехине лайăх курса тăнине пула тунă».

Юлашкинчен хаçат çапла çырать: Англия Европăра часрах иккĕмĕш фронт туса хуни Совет Союзĕн наступлени тăвас хастарлăхне ӳстерсе пырĕ тата гитлеровецсене часах çапса аркатассине хатĕрлесе çитерĕ, тесе ĕненсе тăратпăр»,—тет.

ТУРЦИЯ

Договор Германин пропагандине пырса çапать

АНКАРА, июнĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англипе Совет Союзĕ хушшинче çĕнĕ договор туни çинчен калакан хыпар Турцири политикăллă ушкăнсене питех те интереслентернĕ. Нумайĕшĕ çапла калаççĕ: Турци халăхĕ Совет Союзĕпе Англи тата Америка хушшинче килĕшӳ тунине питех те хапăл тăвĕ, мĕншĕн тесессĕн вăл килĕшӳ нимĕçсен Турцире тăвакан пропагандине—çав демократиллĕ çĕршывсем ытти çĕршывсен никама пăхăнманлăхĕпе пĕрлĕхне пăсасшăн тесе халлапла калакан пропагандине питĕ вăйлăн пырса çапать. Турцири пысăк вырăнта тăракан политикăллă деятельсем чылайĕшĕ тӳрех çапла калаççĕ: çав договор вăл фашистла пропагандăн, хăйĕн агрессиллĕ шухăш-кăмăлĕсене суя халлапсем сарнипе пытарса тăракан фашистла пропагандăн тĕрекне хавшатать, теççĕ.

Хаçатсен умстатьисенче пуринче те В. М. Молотов Лондонпа Вашингтона кайса килнин результачĕсем çинчен çыраççĕ.

«Сон телеграф» хаçатăн редакторĕ Бениджа çапла çырать: «Нимĕнле территори те ыйтмалла мар тата ытти çĕршывсен шалти ĕçĕсене хутшăнмалла мар тесе калакан обязательство пурне те кăмăла каймалла. Иккĕмĕш фронт тума йышăнни, паллах, Германи халăхне нумай шухăшлаттарĕ».

«Журналь д'Ориан» хаçатăн редакторĕ Карасу çапла çырать: «Англипе Америка Европăра кăçалах иккĕмĕш фронт тума обязательство илнĕ. Хăш вырăнта—ку вăл пытарса усрамалли хыпар. Вăл Францире те пулма пултарать, урăх çĕрте те пулма пултарать. Кирек мĕн пулсан та çакна палăртмалла: ирĕклĕ французсен Лондонри радио французсене пролив çыранĕнчи пунктсенчен часрах ытти çĕрелле куçса кайма сĕнет те ĕнтĕ. Америка флочĕн пĕр пайĕ Англин шывĕсем çинче ишсе çӳрет. Çак фактсем çывăхарса килекен ĕçсене кăтартса тăмаççĕ-и вĕсем? Апла пулма пултарать. Хуть те мĕн пулсан та, иккĕмĕш фронт тăвасси теорири проект çеç мар ĕнтĕ, вăл пурнăçланакан обязательство пулса тăрать».

Государствăна 1942 çулшăн тырă параççĕ

СОВЕТСКОЕ. Ителькассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз государствăна 1942 çулхи обязательство шучĕпе 39 центнер ыраш типĕтсе леçсе панă. Çитес кунсенчех колхоз аш-какай, сĕт-çу обязательствисене парса татать. Çавăн пекех Улăх Шăматри «Спутник колхозника» колхоз та çак кунсенче государствăна 30 центнер тĕштырă леçсе панă.

М. СТЕПАНОВА.

РЕСПУБЛИКĂРИ УЙХИРСЕНЧЕ

Бригада çулталăкри ĕç планне 100 процент тултарнă

Канаш МТС-ĕнчи 7-мĕш бригада çуркуннехи ĕç планне 197 процент пурнăçланă. План тăрăх 180 гектар сухаламалла пулнă пулсан, бригада 356 гектар сухаланă. Çураки хыççăнах трактористсем çĕртме сухи тума тытăннă. Июнĕн 12-мĕш тĕлне пурĕ 660 гектар сухаланă, тракторпа тумалли çулталăкри ĕç планне çĕр процентчĕпех тултарнă.

Пысăк пахалăхпа, фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ трактористсем. Çамрăк трактористка Ефросиния Иванова çуракинчи ĕç планне 189 процента яхăн пурнăçланă, çак хушăра 144 литр горючи перекетлесе хăварнă. Пуринчен те лайăххрах Гаврил Тихонов тракторĕ ĕçлет. Çураки планне вăл 230 процент тултарнă, горючине 149 литр перекетленĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн халĕ трактористсем тата хастарлăрах ĕçлеççĕ. Ăмăртура пĕррремĕш вырăна тухассишĕн кĕрешеççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Постановление чыслăн пурнăçласа пыраççĕ

ШАХАСАН. Ухманти «Победа» колхоз членĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен» йышăннă постановление чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем колхозăн уйхирĕсенче стахановла ĕçлеççĕ. Колхозник С. Алексеев кăçал 60 ĕçкунĕ ытла тунă. М. Рогожкина, Сергеева, Семенова, Прокопьева колхозницăсем 80-шар ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

А. ОРЛОВ.

УТĂ ÇУЛМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

СĔНТĔРВĂРРИ, июнĕн 17-мĕш. (Телефонпа). Аначкинори «Красная звезда» колхоз утă çулма хатĕрленет. Косилкăсемпе механизациленĕ кĕреплесене ĕçе тухма хатĕрлеççĕ. Колхозниксем 60 çава хатĕрлесе хунă. Çавасене хăйрама лапаткасене çителĕклĕ тараннах илсе хунă.

А. РАЗИН.

ФЕРМĂСЕНЧЕ ТАСАЛĂХ ТУНĂ

ВĂРНАР. Пăваялĕнчи «Большевик» колхозăн фермисенче нумай пулмасть тислĕк, çӳп-çап тулличчĕ. Кунта пушартан сыхланас ĕçе те япăх йĕркеленĕччĕ. Çакна курса, ялта пушара хирĕç кĕрешекен дружина ферма заведующине кĕске вăхăтрах фермăсенче тата вĕсен таврашĕнчи вырăнта тасалăхпа йĕркелĕх тума хушрĕ.

Çакăн хыççăн пирĕн фермăсен сăнсăпачĕсем улшăнчĕç. Выльăхсен вите сене тислĕкрен, çӳп-çапран йăлтах тасатнă, витесем çумĕнче тата фермăсен килхушшинче каткасемпе шыв лартнă, кунтах курăс милкесем туса хунă.

И. КОРАКОВ.

Выльăх-чĕрлĕх валли витесем тăваççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, июнĕн 17-мĕш. (Телефонпа). Арманкассинчи «Власть труда» колхоз сыснасене хĕллехи вăхăтра усрама çĕнĕ вите тума тытăннă. Колхозăн обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ валли витесем тăвас ĕçре строительсен курсĕнчен нумаях пулмасть вĕренсе тухнă колхозник Алексеев юлташ пысăк пуçарулăх кăтартса ĕçлет. Витесем тунă çĕрте ĕçлеме вăл уйрăм бригада организациленĕ. Халĕ бригада ĕçе хĕрӳллĕн тытăннă.

Çавăн пекех Тури Макаçри «Малалла» колхоз та çитес кунсенчех выльăх-чĕрлĕх витисем тума пуçлать.

А. Р.

Районри вулав çурчĕсенче

ЕТĔРНЕ. Юлашки вăхăтра районри чылай вулав çурчĕсен ĕçĕ аванланчĕ.

Стрелецки ялсоветĕнчи вулав çурчĕ тăтăшах лекцисем, калаçусем туса иртерет. Кунта колхозниксем ирсерен тата каççерен радиопа паракан юлашки хыпарсене итлеççĕ.

Вулав çурчĕ хăй тавра ялти актива явăçтарнă. Агитаторсем ĕççыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе партипе правительствăн заданийĕсене вăхăтра пурнăçлассипе тата колхозăн ĕçĕсемпе таччăн çыхăнтарса пыраççĕ.

Чурпай ялсовечĕ çумĕнчи вулав çурчĕ те хăйĕн ĕçне аван туса пырать. Унта час-часах пухăнса калаçусем туса иртереççĕ, хаçатсем çинчи хыпарсене вуласа ăнлантарса параççĕ.

Анчах вулав çурчĕсем пурте хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыраймаççĕ-ха. Уйрăм вулав çурчĕсем, сăмахран Уйкас, Мăн Йĕкĕт, Кăкшăм ялсоветĕнчи вулав çурчĕсем, мирлĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çав вулав çурчĕсен малта пыракансен ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашмалла. Районри çутĕç пайĕн политпросвет инспекторĕн те вĕсене ĕçре пулăшса пымалла.

И. ТИМОНИН.

Завод коллективĕн юлашки уйăхри ĕçĕсем

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн пĕррремĕшĕнчи приказĕ ĕççыннисен производствăри хастарлăхне çĕклерĕ. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳллĕн çапăçма мĕн кирлине пурне те парса тăрассишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту кунран кун вăйланса пырать.

Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ, Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса, пысăк обязательствăсем илчĕ: иккĕмĕш кварталта вагонсем юсамалли плана июнĕн 22-мĕш тĕлне тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент чухлĕ чакарма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, ĕç пахалăхне лайăхлатма пулчĕ. Çак обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе, коллектив май уйăхĕнче чылай çитĕнӳсем турĕ. Цехсем пурте оборонăллă продукцисем туса кăлармалли плансене ытлашшипех тултарчĕç. Уйрăмах Токарев юлташ начальник пулса, Абрамов юлташ партгруппа секретарĕ пулса ертсе пыракан цех мала тухрĕ. Ку цех май уйăхĕнчи производство планне 29 кун хушшинче тултарса, планран ирттерсе продукци пачĕ.

Ĕç нормине икçĕр е ытларах та процент тултаракан рабочисен хисепĕ цехра кунран кун ӳсет. ВКП(б) кандидачĕ токарь Бельский юлташ сменăри нормăна пĕрмаях 300 процент тултарать. Скрыпник, Савченко, Никитюк, Некрасов, Ковалев, Ямбеков токарьсем те 2—3-шер норма тултараççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, цехри рабочисем хăйсен нормисене май уйăхĕнче 198 процент тултарнă. Ку ĕнтĕ цех коллективĕ нормăпа пăхнинчен 2 хут тухăçлăрах та хăвăртрах ĕçлени çинчен калать.

Çак çитĕнӳсене тума цех коллективне çирĕп график тăрăх ĕçлени чылай пулăшрĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннăранпа график кунта кашни кун пурнăçа кĕрсе пырать. Уйрăмах Ямпольский юлташăн смени графика пăхăнса ĕçлет, çавăнпа вăл кулленхи задание пĕрмаях ирттерсе тултарать.

Вагонсем юсакан цех та (начальникĕ Коломиец юлташ, партгруппа секретарĕ Шлапак юлташ) май уйăхĕнче начар мар ĕçлерĕ. Май уйăхĕнче цех коллективĕ апрельринчен 30 вагон ытларах юсаса кăларчĕ. Цехра комплекспа комплекс, бригадăпа бригада ăмăртăва тухрĕç, татăклă обязательствăсем илчĕç. Капелюх юлташăн бригади хăйĕн уйăхри обязательствисене 23 кун хушшинчех тултарчĕ. Çавăн пекех П. Дмитриев, Чернухин, Степанов, Михайлов тата Ф. Дмитриев юлташсен бригадисем те хăйсен обязательствисене ăнăçлăн тултарчĕç. Бригада членĕсем вăя шеллемесĕр, вăхăта пăхмасăр ĕçлеççĕ, задание тултармасăр ĕçрен пăрахса тухмаççĕ. Цехри чи лайăх мастер П. Беляков юлташ, нумай пулмасть парти ретне илнĕскер, вагонсем юсас ĕçе час-часах хăй хутшăнать, мĕнле ĕçлемеллине кăтартать.

Юлашки вăхăтра цехра двухсотниксен йышĕ чылай ӳсрĕ. Нормăна тултарман рабочи пĕре те çук. Цех коллективĕ хăйĕн ĕç нормине май уйăхĕнче 174 процент тултарчĕ.

Цехра малта пыракан рабочисен ĕç опытне анлăн сараççĕ. Социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене кашни кунах тăваççĕ, нормăна ирттерсе тултаракан рабочисен хушамачĕсене ăмăрту хăми çине кĕртеççĕ, вĕсем çинчен стена хаçачĕсенче çыраççĕ. Капла туни рабочисен ĕçлес кăмăлне татах çĕклентерет.

Ĕç нормине ытлашшипех тултаракан рабочисен хисепĕ уйрăмах инструментальнăй цехра пысăк. Кунти рабочисем пурте майлах сменăри нормăсене 200 процент тултарса ĕçлеççĕ. Çавăнпа цех двухсотниксен цехĕ шутланать, май уйăхĕнчи нормăна 237 процент тултарнă. Заводри чи малтанхи тысячниксем çак цехри стахановецсен хушшинчен тухрĕç. Фрезеровщик Осипов, строгальщик Гимранов, термистсем Моряковпа Смирнов юлташсем 10-шер норма тултараççĕ.

Заводри транспорт отделĕн ĕçĕнче иртнĕ вăхăтра пысăк çитменлĕхсем пулнă. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн кунти рабочисем, инженерла-техникла работниксем хăйсен ĕçне лайăхлатсах пыраççĕ. Вĕсем вагонсене икĕ сехет хушшинче пушатма, вагонсене пушă лартнишĕн тивекен штрафсене пĕтерме, чугунçула юсавлă тытма, хĕллене тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илме обязательствăсем илнĕ. Çак обязательствăсене пурнăçласа пынă май, вагонсене пушă тăратассине чылай чакарчĕç, май уйăхĕнче, сăмахран, вагонсем пушă тăманпа пĕрех. Рабочисем продукцисемпе материалсене тиенĕ тата пушатнă çĕрте фронтри пек ĕçлеççĕ. Грузчиксен Халиуллин юлташ ертсе пыракан бригади нормăна кашни кунах 300 процент ытла тултарать. Тагиров юлташăн бригади те унтан юлмасть, хăйĕн ĕçне икĕ-виçĕ хут тухăçлăрах тăвать. Грузчиксем çапла ĕçленине пула, май уйăхĕнче тимĕр-тăмăр тиесе ăсатмалли плана 250 процент тултарнă. Лунин меточĕпе ĕçлекен Петрук, Курчаров машинистсем хăйсен паровозĕсене яланах юсавлă тытаççĕ.

Вагонсем тăвакан цех коллективĕ те ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ӳстерчĕ. Юлашки уйăхра кунта двухсотниксен йышĕ икĕ хут ӳсрĕ. Çав вăхăтрах нормăна тултарманнисен хисепĕ 64 çынран 9 çынна çити чакрĕ. Анчах цех ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Цех вагонсем юсас плана ытлашшипех тултарчĕ пулин те, платформăсем тăвас плана тултараймарĕ. Ку вăл цех коллективĕ яланхи хăвăртлăхсемпе ĕçлеменнинчен, производство командирĕсем, партипе профсоюз организацисем рабочисем хушшинчи социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе ертсе пыманнинчен килет. Кунта стахановецсен ĕç опычĕсемпе ытти рабочисене паллаштарасси çине те сахал çаврăнса пăхаççĕ.

Социализмлă ăмăртура ремонтно-механически цехри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Стахановецсем талăкĕ-талăкĕпе цехран тухмасăр васкавлă заказсене пурнăçлаççĕ. Çак ĕçре Емельянов, Токарев, Юрков, Охрименко токарьсем нормăсене кашни сменăрах 500—600-шер процент тултараççĕ.

Ĕç нормисене ирттерсе тултаракан рабочисен хисепĕ ӳссех пырать. Чылай цехсенче нормăна тултарман рабочисем çук та ĕнтĕ. Заводри парти организацийĕпе производство командирĕсен задачи вăл—цехсем, сменăсем, бригадăсем тата рабочисем хушшинче анлăн сарăлса кайнă ăмăртăва кирлĕ пек ертсе пырасси, кашни рабочи нормăна ирттерсе тултармалла тăвасси пулать. Çавăншăн кĕрешетпĕр те ĕнтĕ эпир халĕ.

Г. СОРОКИН.
Заводри партбюро секретарĕ.

Малта пыракан цехсем

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.) «Партизан» артельри цехсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, вĕсем тата лайăххрах ĕçлессишĕн кĕрешеççĕ.

Май уйăхĕнче плана тултарас тĕлĕшпе скорняжнăй цех коллективĕ мала тухнăччĕ. Халĕ вăл цехри рабочисем çак цехăн заданине 200 процентран кая мар ирттерсе пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. Малта пыракан стахановецсем А. Коннова, К. Герасимова, Т. Фролова кулен икшер норма тултараççĕ, пысăк пахалăхлă продукци туса кăлараççĕ.

Коммунист Коровников юлташ ертсе пыракан çĕвĕ çĕлекен цех та июнь уйăхĕнче начар мар ĕçлет. Цехри рабочисем май уйăхĕн планне 155 процент тултарнă хыççăн июнь уйăхĕнче плана 160 процентран кая мар тултарма пулчĕç. Çакна цех коллективĕ хисеплĕн пурнăçа кĕртсе пырать.

Ată-пушмак çĕлекен цех (начальникĕ Плетнев юлташ) май уйăхĕн программине 38 процент ирттерсе тултарнă. Уйрăм стахановецсем А. Мелентьев, Бабушкин, Дружняев т. ыт. те иртнĕ уйăхра куллен 1,5 норма тултарса пынă.

— Июнь уйăхĕнче те вăя хурса ĕçлетпĕр, панă задание срокчен тултаратпăр,—терĕç цехри рабочисем. Халĕ вĕсем хăйсен сăмахне ăнăçлăн пурнăça кĕртсе пыраççĕ.

Х. ЛИСИН.

Нормăна кашни рабочи 150 процент тултарма пулнă

Шупашкарти «Красный кустарь» артель пуçа тăхăнмалли япаласем туса кăларать. Вĕсене нумайрах туса кăларас тесе артель коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Коллектив июнь уйăхĕнче ĕç тухăçлăхне 5 процент ӳстерме, рабочисенчен кашниех хăйĕн нормине 150 процент тултарма обязательство илчĕ. Халĕ чылай рабочисем çак обязательствăсене ăнăçлăн тултарса ĕçлеççĕ Акă, Васильева, Котылева, Аказов стахановецсем нормăна 250 процент, Климова мастер 270 процент таран тултараççĕ. Артельре нормăна тултарман рабочи пĕрре те çук.

Л. ЗЫКОВА.

Ютçĕршывсенче

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле çыранри авиацин самолечĕсем противникăн икĕ суднине путарнă.

Çав каçхинех Англи истребителĕсем противникăн Голландири тата Çурçĕр Францири аэродромĕсем çине тата Абвильри чугунçул узелĕ çине вĕçсе пырса тапăннă.

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат корреспонденчĕ Ливирен çапла пĕлтерет: халĕ союзниксен вăйĕсем, хисеп тата хĕçпăшалланни енчен илсен, противникăн вăйĕсемпе пĕр тан, анчах сывлăшра вĕсем пуç пулса тăраççĕ ĕнтĕ.

Танксен юлашки виçĕ пысăк çапăçăвĕ те англичансемшĕн ăнăçлăн вĕçленнĕ. Хальхи çапăçусем вĕсем—Роммель, Тобрук патне çитес тесе гăваттăмĕш хут тăрмашни пулса тăраççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, халĕ Эль—Эдем—Найтбридж линийĕ çинче танксем çапăçаççĕ.

Англичансем танклă вăйсене Триг-Капуццио çулĕ тăрăх пĕтĕçтерсе тухнă. Нимĕçсен наступленийĕн ăнăçлăхĕ çак участокра пулас пысăк çапăçусенчен килет.

Союзниксем Тобрукран кăнтăралла хăйсен оборонăллă позицийĕсене тытса тăнă май, Тобрука хӳтĕлекенсем халĕ çапăçусене хутшăнмаççĕ-ха.

Гамбургра халăхпа полици хушшинче хĕçпăшаллă çапăçу пулнă

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» çапла пĕлтерет: июнĕн 8-мĕшĕнче Гамбургри доксенче полиципе хĕçпăшаллă тытăçусем пулса иртнĕ.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта яма автомашинăсем çине кофе тиенĕ чухне грузчиксем темиçе михĕ кофĕне карта урлă урама ывăтнă. Иртсе пыракансем пĕр-пĕринчен кофе пăрçисене турта-турта илме пуçланă. Гестаповецсен пысăк отрячĕ пырса çитнĕ, анчах халăх гестаповецсене чулсемпе пенĕ. Пуçланса кайнă тытăçура 7 полицейски вилнĕ тата нумайĕшĕ аманнă. Халăхран нумай çынна арестленĕ, 25 грузчика персе вĕлернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 12-мĕшĕнче Гамбургпа выçлăх пирки пăлхав пулнă. Пăлхава хутшăннисене пусарма войскăсем янă. 27 çынна вĕлернĕ, вĕсем хушшинче 3 хĕрарăм пулнă.

Апат-çимĕç питех те çителĕксĕр пулнăран тата ăна тăтăшах илсе пырса тăман пирки юлашки эрнесенче Гамбургра халăх хытă тарăхать. Темиçе çĕр çын пасара кĕме тытăнсан, полиципе войскăсем вĕсем çине пăшалтан пенĕ.

Румынире çăкăр памалли нормăна чакарни

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румынире çын пуçне çăкăр памалли нормăна 250 грамм юличчен чакарнă.

Германи самолечĕсем Швеци суднисем çине тапăннă

Июнĕн 12-мĕшĕнче тинĕсре Германин икĕ истребителĕ Швецин пулă тытакан пысăк судни çине тапăннă. Самолетсем судно çине 7 хут пырса кашни хутĕнчех ун çине пăшалсенчен пенĕ. Суднăна пысăк сиен кӳнĕ. Капитана тата пĕр пулăçа йывăр амантнă. Скагеррак проливĕнче Германи самолечĕсем Швецин тепĕр суднине тапăннă, ăна пысăк сиен кӳнĕ тата унăн капитанне амантнă. (ТАСС).

АМЕРИКĂРИ ÇĔНĔ ЙЫШШИ БОМБАРДИРОВЩИК

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар министерстви çĕнĕ йышши бомбардировщик—«ТОФ Груман Авенджер» торпедоносец çинчен пĕлтернĕ.

Çав бомбардировщик сехетре 430 километр ытла каять; пĕр чарăнмасăр 2.200 километр таран вĕçме пултарать; 6.000 метр çӳллĕшне хăпарать; 900 килограмм бомба е пĕр торпеда йăтса пыма пултарать.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă Тинĕс Флочĕ çĕнĕ машинăна график тăрăх палăртнă срокран темиçе эрне малтанрах илнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Коллектив Чувашской Конторы Госбанка с прискорбием извещает о преждевременной смерти ст. инспектора городского Управления

САРРО
Алексея Федоровича

и выражает соболезнование семье покойного.

ОБ'ЯВЛЕНИЕ.

19 июня с. г., в 7 часов вечера, в зале заседаний Верховного Суда Чув. АССР созывается совещание главных (старших) бухгалтеров для инструктажа по налоговым вопросам и о порядке выплаты компенсации.

Горфинотдел.

Открыт прием подписки на 2-е полугодие 1942 года на газеты и журналы.

ГАЗЕТЫ:
1. Эйникайт, на еврейском языке.
2. Ведомости Верховного Совета на национальных языках.
3. Водный транспорт.
4. Учительская газета.
5. Социалистическое земледелие.
6. Медработник.
7. Военное обучение.
8. Техсоветы МТС.
9. Совхозная газета.

ЖУРНАЛЫ:
1. Знамя.
2. Красная новь.
3. Октябрь.
4. Ветеринария.
5. Колхозное производство.
6. Торфяная промышленность.
7. Легкая промышленность.
8. Текстильная промышленность.
9. Противопожарчая оборона.
10. Санитарная оборона.
11. Картотека Сельсо.
12. Вестник связи.
13. Местная промышленность.

Последний срок сдачи подписки 20 июня.

СОЮЗПЕЧАТЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

Гор. Чебоксары типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 319. Ф. 6. 58 64